Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

3 (8167) № * Шăмат кун, 2014 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 18-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

# Стипенди илме тивĕçрĕç

**Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине кăçал илсе тăма тивĕçнĕ Юлия Петровăна, Ирина Григорьевăна тата Анастасия Ефановăна (сулахайран сылтăмалла) куратăр. Пултаруллă пикесем Муркашри вăтам шкулти 9 «а» класра (ертӳçи Е. Ефанова) вĕренеççĕ.**

**Юля район шайĕнчи олимпиадăра чылай предметпа призерсен шутне кĕме пултарнă, квилинг енĕпе тата сăн ӳкерчĕксем тăвассипе республикăпа Раççей шайĕнчи конкурссенче те малтисен йышне кĕме пултарнă. Кунсăр пуçне вăл Муркашри ача-пăча искусствин шкулĕнчи фортепиано тата хореографи уйрăмĕсене вĕренсе пĕтернĕ.**

**Иринăн палăрăмлă çитĕнĕвĕсем спортра. Ăна кашни кунах ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК-ра курма пулать. Ишессипе вăл районта кăна мар, республикăра та палăрса тăрать – чылай ăмăртăвăн çĕнтерӳçипе призерĕ, аслисен 1 разрядне пурнăçлама та ĕлкĕрнĕ. Волейболла тата баскетболла аван вылять, çавăнпах ĕнтĕ районăн пĕрлештернĕ командине кĕме тивĕçнĕ.**

**Настя та шкул ачисен олимпиадин район тата республика тапхăрĕсен призерĕ пĕрре мар пулнă, «EXCELSIOR» наукăпа практика конференцийĕн республикăри призерĕ пулма тивĕçнĕ. Вăл искусство шкулĕн хореографи тата художество уйрăмĕсене вĕренсе пĕтернĕ. Унăн çитĕнĕвĕсем хушшинче Раççей шайĕнчи художество пултарулăх конкурсĕсен çĕнтерӳçипе призерĕ пулни те пур. Кăçалхи çула та Настя пысăк çитĕнӳрен пуçларĕ: иртнĕ кунсенче вăл МХК предмечĕпе иртнĕ олимпиадăн республика тапхăрĕнче çĕнтерчĕ.**

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**



***Çĕр-шывра та, пирĕн республикăра та пултаруллă ачасемпе çамрăксене аталанма пулăшассине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çавăнпа та вĕсене хавхалантарас тĕллевпе ятарлă проект та пур.***

***Унта палăртнă тăрăх Раççей тата тĕнче шайĕнчи олимпиада çĕнтерӳçисене ятарлă преми параççĕ. Çапла вара пĕлтĕрхи пĕтĕмлетӳ тăрăх РФ Вĕренӳ министерствин хушăвĕпе пирĕн районти Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă Николай Данилов тата Йӳçкассинчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă Екатерина Федорова çак премийĕн лауреачĕсем пулса тăнă, унпа пĕрлех 30-шар пин тенкĕ укçа хавхалантарăвне тивĕçнĕ.***

***Чăваш Республикинчи пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене – 14 çул тултарнисенчен пуçласа 30 çулчченхисене – ятарлă стипенди парса чысласçĕ. Çак стипендие тивĕçекенсем хушшинче – вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракансем, бизнес-проект хатĕрлессипе, наука, пултарулăх, производство, ертсе пырас ĕç енĕпе çитĕнӳ тăвакансем.***

***Иртнĕ кунсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пултарулăхпа палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене 2014 çулта стипенди парасси çинчен хушу кăларчĕ.***

***Кăçал пирĕн районти 17 çамрăк çак хавхалантарăва тивĕçрĕ, вĕсем уйăхсерен 1830 тенкĕ илсе тăрĕç:***

**Андрей Александрович Арсентьев** – «Муркашри кирпĕч завочĕ» хупă акционер обществин слесарь-ремонтникĕ;

**Валентина Валерьевна Васильева** – Муркашри вăтам шкулта вĕренекен;

**Ирина Анатольевна Григорьева** – «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ» хушма пĕлӳ паракан муниципалитет автономи учрежденийĕн вĕренекенĕ;

**Надежда Марсовна Димитриева** – Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекен;

**Сергей Петрович Димитриев** – районти «Ача-пăча пултарулăх çурчĕ» хушма пĕлӳ паракан бюджет вĕренӳ учрежденийĕн вĕренекенĕ;

**Анастасия Олеговна Ефанова** – Муркашри вăтам шкулта вĕренекен;

**Светлана Геннадьевна Кириллова** – Муркашри тĕп больницăри медицина сестри;

**Геннадий Юрьевич Любимов** – Муркашри территори суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн ертӳçи;

**Марина Николаевна Онькова** – Муркашри тĕп больницăри акушер;

**Ксения Николаевна Петрова** – Йӳçкассинчи вăтам шкулта вĕренекен;

**Юлия Юрьевна Петрова** – Муркашри вăтам шкулта вĕренекен;

**Игорь Аркадьевич Смирнов** – Шетмĕпуçĕнчи информаципе культура центрĕн директорĕ;

**Александр Анатольевич Степанов** – «Муркашри кирпĕч завочĕ» хупă акционер обществин электросварщикĕ;

**Павел Сергеевич Соколов** – районти «Ача-пăча пултарулăх çурчĕ» хушма пĕлӳ паракан бюджет вĕренӳ учрежденийĕн вĕренекенĕ;

**Мария Александровна Сытина** – «Арçын ачасемпе хĕр ачасен союзĕ» районти ача-пăча обществăлла пĕрлешĕвĕн членĕ;

**Лариса Всеволодовна Тойгильдина** – «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешĕвĕн агрономĕ;

**Елена Вячеславовна Шурнеева** – «Рябинушка» ача сачĕн воспитателĕ.

## Ыран – Чăваш пичечĕн кунĕ

**ХИСЕПЛĔ РЕДАКТОРСЕМ, ЖУРНАЛИСТСЕМ, ХАÇАТ-ЖУРНАЛ, КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАНСЕМ, ПОЛИГРАФИСТСЕМ!**

Сире професси уявĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп!

Пресса кирек хăш вăхăтра та общество шухăшлавне йĕркелемелли чи пĕлтерĕшлĕ инструментсенчен пĕри пулнă. Хальхи ĕмĕрте, информатизаци çыннăн пурнăç тивĕçтерĕвĕн пĕтĕм сферине питĕ пысăк хăвăртлăхпа кĕрсе пынă тапхăрта, массăллă информаци хатĕрĕсен общество аталанăвĕнчи пĕлтерĕшĕ татах та ӳсет.

Чăваш Ен Правительствин тĕп тĕллевĕсем – влаç уççăнлăхне ӳстересси, республикăра пурăнакансене пĕлтерĕшлĕ пулăмсем пирки калакан тулли те тĕрĕс информаципе вăхăтра тата васкавлăн тивĕçтересси.

2013 çулта республика конкурсĕ иртнĕ, ăна пула Чăваш Ен медиауçлăхĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ 41 проектпа пуянланнă. Патшалăхăн тата патшалăхăн мар массăллă информаци хатĕрĕсем пĕлтерĕшлĕ те çивĕч темăсемпе – сывă пурнăç йĕркине, толерантлă ăс-тăна, çемье, амăшлăхпа ачалăх пахалăхĕсене йĕркелессипе, Чăваш Республикинче пурăнакан халăхсен пултарулăхне тата нацисен хутшăнăвне аталантарассипе, патриотлăх, чунлăх тата кăмăл-сипет пропагандипе – çыхăннă мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ. Çĕнтерӳçĕ-проектсем республика бюджетĕнчен 11 млн тенке яхăн грант пулăшăвĕ илнĕ.

Медиахолдинг туса хунă, унăн тытăмне чăвашла тухакан чи лайăх хаçатсемпе журналсем кĕнĕ, çакă информаципе тивĕçтерессин пахалăхлă çĕнĕ шайне куçма май пачĕ. Республикăри муниципалитетсенче учреждени сечĕсен оптимизацийĕ иртнĕ, район пресси малтанхи пекех тиражсене сыхласа хăварать, мĕншĕн тесен ялти вулакансем валли хаçат – информацин тĕп çăл куçĕсенчен пĕри.

Кăçал та пире пĕрлехи вăйпа хамăрăн регионти массăллă информаци хатĕрĕсене аталантармашкăн тата пулăшмашкăн нумайрах ĕç тума, республикăн медиауçлăхне çĕнĕ варкăш кĕртме май килессе шансах тăратăп.

Пичет ĕçченĕсемпе ветеранĕсене Чăваш Ен ырлăхĕшĕн хавхаланса ĕçленĕшĕн тав тăватăп, çирĕп сывлăх, пултарулăхра – ăнăçу, телейпе ырлăх сунатăп.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

**ПИЧЕТ ĔÇĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВЕТЕРАНĔСЕМ, ХАÇАТ ТУСĔСЕМПЕ ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Сирĕн ĕç çав тери яваплă. Пурнăçра пулса иртекен çĕнĕлĕхсемпе улшăнусем çинчен вулакан патне вăхăтра тата тĕрĕс те ăнланмалла çитермелле. Çакă сире пĕлӳ тата пултарулăх шайне ӳстерсе тăма хистет. Çавăн пекех хăвăрăн ĕç çине пысăк яваплăхпа пăхма хушать. Хаçат страницисенче район пурнăçне пур енлĕн çутатма тăрăшни, хаçатри материалсем вулакана хăйĕн шухăшне калама хистени эсир хăвăрăн тивĕçĕре кирлĕ пек пурнăçланине кăтартса парать.

Эсир малашне район пурнăçне татах та анлăрах, туллинрех çутатасса, хаçата малашне татах та интереслĕрех тăвасса, хаçатпа вулакан хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тесе тăрăшасса шанас килет. Районта пурăнакансене вара район хаçачĕпе туслă пулма, кашни килтех ăна çырăнса илме сĕнетĕп.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телей, ĕçре ӳсĕмсем сунатăп. Хаçат ĕçченĕсен интереслĕ статьясем ытларах çырăнччăр, районта пурăнакансемшĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» кĕтнĕ хăна пултăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

# Пичет кунĕсемпе саламларĕ

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев январĕн 16-мĕшĕнче районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕнче пулса курма кăмăл турĕ. Ăнсăртран мар, Ростислав Николаевич пичетĕн çăмăл мар ĕçĕнче вăй хуракансене Раççей тата Чăваш пичечĕсен кунĕсемпе саламларĕ, вĕсене хисеплĕ те кирлĕ ĕçре ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунчĕ.

Сăлтавĕ те çук мар темелле. Паянхи çăмăл мар вăхăтра Анатолий Тихонов ертсе пыракан коллектив республика шайĕпе танлаштарса пăхсан япăх мар ĕçлесе пырать, малалла тăвакан утăмсем, ӳсĕмсем те сулмаклă.

Район хаçачĕн тиражĕ пирки калас пулсан та çакнах çирĕплетмелле. Тираж çулран-çул ӳссе пырать. Кăçалтан унăн тиражĕ 4931 экземпляра çитрĕ. Республикăри ытти районсем хушшинче те ку виççĕмĕш кăтарту. Муркашсенчен малтисем Патăрьелсемпе Етĕрнесем кăна. Районта çынсен шучĕ чакса пынă вăхăтра «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат тиражĕ ӳссе пырать пулсан район хаçачĕ çынсене кирлĕ, вĕсем ăна вулаççĕ, унта пичетленекен материалсем вĕсене интереслентереççĕ, чунĕсене çывăх.

Муркаш район хаçачĕ кăçалхипе пиллĕкмĕш хут Раççейри прессăн ылтăн фончĕн çĕнтерӳçи шутне кĕме тивĕçрĕ. Çакă та – коллектив ӳсĕм çулĕпе пынин курăмлă тĕслĕхĕ. Хаçат редакцийĕ республикăра иртterекен конкурссене хутшăнса пĕрре кăна мар призерсен Дипломĕсемпе грамотисене, Тав хучĕсене тивĕçрĕ.

Хаçат сотрудникĕсем хальхи çĕнĕ технологи мелĕсене алла илессипе çине тăрса ĕçлеççĕ, хăйсен професси ăсталăхне ӳстерсех пыраççĕ.

Çак саманта асăнса хăварни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ытларах укçа-тенкĕне хаçат редакцийĕ хăйĕн вăйĕпе ĕçлесе илме тăрăшать. Çапла майпах тăтăшах пичет тата компьютер оборудованийĕсене çĕнетсе пырать. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна редакци çуртĕнче 1 млн. тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем туса ирттерме палăртаççĕ. Кабинетсенче хăтлă, ăшă, тирпейлĕ.

Юлашкинчен район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев пичет ĕçĕнче уйрăмах палăрнисене район администрацийĕн Хисеп грамотине парса чыс турĕ, малашне те ăнăçлă ĕçлеме ырлăх-сывлăх сунчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Çулталăк итогĕсене пĕтĕмлетме

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе ирттернĕ канашлура муниципаллă районсен 2013 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсене халăхпа сӳтсе явса пĕтĕмлетме хушнă. Республика шайĕнче çакăн пек ларусене хутшăнма тăвата ушкăн йĕркеленĕ.

Пирĕн районта кун пек лару февралĕн 3-мĕшĕнче райадминистрацин ларусен залĕнче 13 сехетре пуçланать. Ĕç итогĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев пĕтĕмлетет.

Ларăва районти ĕç çыннисене активлă хутшăнма ыйтаççĕ.

## Февралĕн 14-мĕшĕнче уявлатпăр

Ĕнер район 70 çул тултарнине хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕ пулнă. Ăна унăн ертӳçи Р. Тимофеев ертсе пынă.

Район юбилейне халалланă чаплă ларăва февралĕн 14-мĕшĕнче Чăваш академи драма театрĕнче ирттерме палăртнă.

Ларура район юбилейне хатĕрленсе ирттерес ытти ыйтăва та сӳтсе явнă.

## Кĕскен

### 214 миллиард тенкĕ

Дмитрий Козак вице-премьер журналистсене Сочири Олимп вăййисене ирттерме каякан пĕтĕмĕшле тăкак 214 миллиард тенкĕпе танлашассине пĕлтернĕ. Çав шутран 99 миллиард тенки – бюджетран.

Счет палатипе Росфиннадзор тĕрĕслевĕ укçа-тенкĕпе тĕллевсĕр усă курнине палăртман, тенĕ Козак.

### Вырăнти хаçатсен пĕлтерĕшĕ ӳсет

Чăваш Енре 18 çултан аслăраххисен 89,9 процентĕшĕн информаци илмелли тĕп çăл куç телевидени пулса тăрать. Çакна Чăваш патшалăх гуманитари институчĕ ирттернĕ социологи тĕпчевĕ çирĕплетет. Иккĕмĕш вырăнта – Интернет (58,5 процент). Хаçатсем респондентсен 57,3 процентне, радио 47,2 процентне пухма пултарнă.

Кунпа пĕрлех республикăри тата вырăнти хыпарсене вулакансен шайĕ ӳсни палăрать. Енчен те 2011 çулта республика тата район хаçачĕсене ыйтнисенчен 18,5 процентĕ вуланă пулсан, иртнĕ çул – 25,7 процент.

### Патшалăх услугисене – электрон мелĕпе

Чăваш Енре пурăнакансенчен 41 пин çын патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче харпăр хăй кабинечĕсене уçнă. 2013 çулта вĕсем 58 пин ытла ыйтăм электрон мелĕпе ярса панă. Вăл шутран федераци ведомствисене – 46 пине яхăн, регион ведомствисене – 12 пине яхăн, муниципалитет ведомствисене – 430-а яхăн. Ку кăтартусене акционерсен «Ростелеком» уçă обществи илсе парать.

Аса илтеретпĕр, паянхи куна патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче Чăваш Республикин регионăн 69 услугине илме май пур.

# Икĕ çыру – пĕр ыйту пиркиех

*Ялти пурнăç хальхи вăхăтра çăмăл, пĕр проблемăсăр тесе калаймăн. Пурнăçĕ лайăх еннелле улшăнсах пынине курса тăратпăр пулин те, татах лайăхрах, хăтлăрах, аванрах пурăнас туйăм пурри япăх мар. Паян вулакансене икĕ статья сĕнетпĕр. Ял ыйтăвĕсенех хускатаççĕ вĕсенче. Анчах вĕсен шухăш-кăмăлĕ кăшт раснарах. Хаçат вулакансем те асăннă статьясем пирки хăйсен шухăш-кăмăлне пĕлтерме пултараççĕ.*

## Çитменлĕхсем çав-çавах пур-ха

Район хаçачĕн 2012 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнчи тата 29-мĕшĕнчи номерĕсенче «Мăн Сĕнтĕрсене хумхантаракан ыйтусем» ятпа манăн статья пичетленнĕччĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ пулнă май асăннă статьяра эпĕ Мăн Сĕнтĕрсене канăç паман ыйтусене çĕкленĕччĕ. Статьяна ун чухне депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕ те ырланăччĕ. Унтанпа çулталăк ытла иртрĕ ĕнтĕ. Мĕнле улшăнусем пулчĕç-ха çак тапхăрта?

Паллах, улшăнусем çук мар. Халăх питĕ ыйтнипе Горький урамĕнче тата çул Ильинка еннелле пăраннă çĕре çити тротуар тăвас ыйтупа манăн район тата республика шайĕнчи влаç органĕсен ответлă ĕçченĕсем патне пĕр хут кăна мар çитме тиврĕ. Çак тротуар кирлине тĕрĕс ăнланнăшăн тата ăна тума пулăшнăшăн Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансен ячĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне Владимир Никитина тав сăмахĕ калас килет. Ыйтăва татса парассипе пĕр шухăшлă пулнăшăн депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Валерий Кожанов та ырă сăмаха тивĕçлĕ.

Паллах, тротуара ялта пурăнакансем хапăл тусах йышăнчĕç. Анчах хĕл кунĕсем çитрĕç те тротуара никам та тасатакан çук. Тасатма мар, çул тасатакан техника çул çинчи юра тротуар çинелле хырса ывăтса хăварать. Çынсем вара каллех çул тăрăх утаççĕ. Инкек пулма пултарасси куç умĕнчех. Çак ĕçре камăн йĕрке тумалла-ха?

Статьяра çĕкленĕ тепĕр ыйту вăл Трудовая урама тирпей-илем кĕртесси пирки пулнăччĕ. Асăннă урамра ячĕшĕн тенĕ пек вак чул сарса хучĕç. Анчах та чул айне хăйăр пачах та хуманран ку ĕçĕн усси вăхăтлăх кăна тесе шухăшлатăп. Мĕншĕн тесен 3 – 4 çул хушшинче чул сарнă çак çул каллех пылчăк айне пулма пултарать. Ун чухне тăкакланă 250 пин тенкĕ шывпа юхса кайни кăна пулĕ. Пурăнсан курăпăр.

Ку тăрăхра пурăнакансем Мăн Сĕнтĕрте чылайранпа чиркӳпе Культура çурчĕ пĕр çуртра пулнипе кăмăлсăрччĕ.Чиркӳ настоятелĕ Игнатий атте тата Шупашкарпа Чăваш епархийĕ Культура çуртне чиркӳрен уйăрас ыйтупа республикăри влаç органĕсенче сахал мар пулчĕç, çырусемпе федераци шайне те тухрĕç. Республика Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин та тимлерĕ. Тăрăшни сая каймарĕ, халĕ ĕнтĕ Мăн Сĕнтĕрте çĕнĕ информаципе культура центрĕ пур.

Нумаях пулмасть пирĕн патра 51 хваттерлĕ виçĕ хутлă çурт тума тытăнчĕç. Авариллĕ çуртсенчи 43 çемье кĕçех çак çĕнĕ çуртра хăтлă хваттерсенче пурăнма тытăнĕ. Тепĕр 8 хваттерне кăмăл пуррисем туянĕç. Кирлĕ документсене вăхăтра хатĕрлесе парса Новая урамра 13-мĕшпе 15-мĕш çуртсенче пурăнакан çемьесене программăна кĕртме май килчĕ. Çавăн пекех Ленин урамĕнчи 79-мĕш çуртра пурăнакансем те «çывăрса» юлмарĕç.

Новая урамри 13-мĕшпе 15-мĕш çуртсенче пурăнакансем хăй вăхăтĕнче пурăнакан çуртсем çывăхĕнче капиталлă майпа тĕрлĕ хуралтăсем тунă, самай тăкакланма тивнĕ. Çавăнпа вĕсем çак çуртсене хăварасси пирки ĕмĕтленеççĕ. Паллах, май пур таран çак ыйтăва татса пани вырăнлă тесе шухăшлатăп.

Çемьесене авариллĕ çуртсенчен куçарассин программине кĕреймесĕр тăрса юлнă Новая урамри 2-мĕш çуртра пурăнакансем май тупса ку çурта та программăна кĕртме май тупнăшăн район администрацийĕн пуçлăхне Ростислав Тимофеева чĕререн тав сăмахĕ калаççĕ.

Авариллĕ çуртсенчен куçарас ĕç Мăн Сĕнтĕрте вĕçленмен-ха. Асăннă программăна кĕреймесĕр юлнă çуртсем татах пур. Ленин урамĕнчи 2-мĕш, 21-мĕш, 49-мĕш, Советская урамри 25-мĕш, Новая урамри 17-мĕш, Учительский тăкăрлăкри 1-мĕш çуртсенче пурăнакансем те çак программăна кĕрсе хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма ĕмĕтленеççĕ. Ку çуртсем пурте нумай хваттерлĕ.

Урамсене тирпей-илем кĕртесси хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕрте кирлĕ шайра мар. Апла пулин те шкул, поликлиника, культура учрежденийĕн умĕсенчи çул айккинчи лаптăксене кăштах çирĕплетсе панăшăн район администрацине тав сăмахĕ калас килет. «Хантымансийскдорстрой» организаци те ку ĕçрен айккинче тăрса юлмарĕ. Ытти урамсене илес пулсан вара лайăх еннелле улшăнусем çук.

Уйрăмах Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансене ĕçмелли шывпа тивĕçтерес ĕçре йĕрке çук. Тĕрĕсрех каласан ку тĕлĕшпе хуçа çук. Ку енĕпе йĕрке тăвас шутпа икĕ хутчен те аукцион туса ирттерме хăтланчĕç. Аукцион пулаймарĕ. Анчах та пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх аукциона вĕсем выляса илес пулсан та шывпа тивĕçтерессипе Мăн Сĕнтĕрсен малашлăх çук. Мĕншĕн тесен скважинăсемпе башньăсене ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарассипе çак вăхăта та документсене хатĕрлесе çитермен. Нивушлĕ çак ĕçре йĕрке тума май çук пулĕ е Мăн Сĕнтĕрти хамăрăн коммуналлă хуçалăх предприятине пĕтернипех лăпланса лармалла-ши?

Тепĕр çивĕч ыйту вăл – урамсене çĕрлехи вăхăтра çутатса тăрасси. Ку тĕлĕшпе вара Мăн Сĕнтĕрте кăмăлсăррисем сахал мар. Çак ĕçе кашни урамра мĕн чухлĕ çутă кирлине шута илсе йĕркелеме май çук-ши вара? Тĕслĕхрен, Ленин урамĕ, чиркӳ патĕнчен пуçласа çармăссем патнелле каякан çул вĕçне çитиех тĕттĕмре лараççĕ. Ку çулсемпе вара кам кăна иртсе çӳремест пулĕ.

Мăн Сĕнтĕрте вырсарни кунсенче пасара çын нумай пуçтарăнать. Пасар территорийĕнче йĕрке япăх мар. Халăх уншăн пасар хуçине Н. Маринкинăна тав сăмахĕ кăна калать. Апла пулин те пылчăк вăхăтĕнче пасар территорине çитме вара хĕнтерех. Мĕншĕн-ха çак çула (хăй вăхăтĕнче кунта асфальт пулнăччĕ) йĕркене кĕртесси пирки ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кăштах та пулин пуçне ыраттармалла мар? Мĕн чухлĕ çын тарăхса влаçра ларакансене ятламасть пулĕ.

Новая урамра тротуар çукки пирки те нумай калаçатпăр. Анчах хальлĕхе усси çукрах. Ман шутпа çак урама тĕпрен реконструкци тумалла. Кунта Мăн Сĕнтĕрсен ытларах пайĕ пурăнать.

Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансем мунчасăр нушаланни чылая кайрĕ ĕнтĕ. Апла пулин те нумаях пулмасть мунча çуртне мунча шутĕнчен ахаль çурт çине куçарса сутса яни вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет. Çакă вăл кунта пурăнакансене пурăнма кирлĕ условисем туса пани пулать-ши? Е ертӳçĕсене юлашки çурт-йĕре, çĕрсене сутса бюджета укçа пухасси кăна хумхантарать? Йăлтах сутса пĕтерсен кайран мĕнпе пурăнăпăр?

2013 çула Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк тесе йышăннăччĕ. Апла пулин те ял тăрăхĕн территорийĕнче ку тĕлĕшпе лару-тăру лайăх еннелле улшăнни сисĕнмерĕ. Мăн Сĕнтĕртех, ял варринче вырнаçнă çырмарах мĕн кăна çук пулĕ.

Е тепĕр тĕслĕх. Вомпăкасси ялĕнче илемлĕ пĕве пуррине пурте пĕлеççĕ. Пĕвен çӳлти вĕçĕнче вара мĕн кăна пырса пăрахса тултарман пулĕ? Чăн-чăн ирсĕрлĕх. Халĕ ĕнтĕ ку «ырлăх» юр айĕнче.

Кунсăр пуçне тата халĕ килĕрен тенĕ пекех харпăр хăй патне шыв кĕртнĕ. Таса мар шыв пухăнмалли шăтăксене вара урамах алтаççĕ. Çитменнине вĕсене кирлĕ пек витсе те хумаççĕ. Йĕркеллĕ япалах-ши вара çакă?

Эпир темĕнле пурăнсан та пурнăç малаллах шăвать. Акă тепĕр çулталăк та хыçа юлчĕ. Паян ĕнерхинчен, ыран вара паянхинчен лайăхрах пурăнас тесен алă усса ларнипех çырлахмалла мар. Хамăртан та нумай килет. Ку вăл никамшăн та вăрттăнлăх мар пулĕ. Апла пулин те влаçрисен те халăх ыйтнине, вĕсен кулленхи проблемисене шута хурса ĕçлемелле.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

## Ыйтусене пĕрле татса памалла

**Асăннă статья пирки хăйĕн шухăшне Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий ЛАПТЕВ пĕлтерме кăмăл турĕ:**

– Трудовая урам Мăн Сĕнтĕрти чи йывăр лаптăк шутланать. Мĕншĕн тесен урам варрипе канализаци, водопровод каяççĕ, электропередача линийĕн юписем те кунтах. Çапах та асăннă урамра пурăнакансен ыйтăвне тивĕçтерсе ку урама кăштах хăт кĕртме май килчĕ. 2011 çулта хăйăр турттарса урама сарса тухрăмăр, 2012 çулта вара Мăн Сĕнтĕрти Трудовая урамри çула юсама 254487 тенкĕ тăкакларăмăр. Çула сарма хăйăрпа вак чулăн пĕршер хучĕпе усă курма палăртнă пулнă. Хальхи вăхăтра ку çулпа кирек хăçан та автомашинăсем те çӳреççĕ, çуран çынсем те утаççĕ. Çак вăхăта кунран лайăхраххи нимĕн те çук тесе шухăшлатăп. Ял хушшине асфальтпа бетон сарма вара хальлĕхе укçа çитеймест.

2013 çулта ял администрацийĕ Мăн Сĕнтĕрти Заводская тата Багров урамĕсенчи, Мăн Хураçкари Чеботарская урамри, Турикассинчи Молодежная урамри çулсене юсаса тухрĕ. Ку çулсене вак чул сарса йĕркене кĕртме май килчĕ. Çулсене юсаса панăшăн çынсем савăнаççĕ кăна мар, хаçат урлă та тав сăмахĕ çыраççĕ. Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри асфальт сарнă çула та 2012 çулта юсаса тухрăмăр.

2012 çул пирĕншĕн япăх çулталăк пулмарĕ. Мĕншĕн тесен Культура çуртне чиркӳ çуртĕнчен кăларма пултартăмăр. Хыççăн вара кану центрĕпе юнашар пристрой тума проект тутартăмăр. Проектшăн Н. Ванеркин тӳлерĕ. Кайран аукцион ирттертĕмĕр, ял тăрăхĕн администрацийĕ Мăн Сĕнтĕрти Ленин урамĕнчи кану центрĕ çумĕнче пристрой тума 20 миллион ытла тенкĕлĕх муниципалитет контракчĕ хатĕрлерĕ. Объекта ĕçе кĕртме вырăнти бюджетран 1 млн. тенкĕ тăкакланă. Çавăн пекех Муркаш район администрацийĕ 600 пин тенкĕ уйăрчĕ. Пысăк тав сăмахĕ калатăп уншăн. Культурăпа кану центрне туса пĕтернĕ хыççăн ун умĕнчи, шкул патĕнчи тата поликлиника умĕнчи территорисене асфальтпа бетон сарса йĕркене кĕртме май килчĕ. Куншăн та спонсорсене тата район администрацине пысăк тав.

Граждансене авариллĕ çурт-йĕртен куçарассипе самантсем нумай. Çакна çуртра пурăнакансен хăйсен заявленийĕсемсĕр тата документсемсĕр туса ирттерме май çук. Комисси вара хăй тĕллĕн çынсене çуртран куçарасси пирки ыйтăва татса пама тата документсем хатĕрлеме пултараймасть. Хăш-пĕр çынсемшĕн вара ку ыйту чăннипех те çăмăл мар. Мĕншĕн тесен ку çуртсенче пурăнакансенчен чылайăшĕ çак вăхăта ытти хуралтăсем те çавăрма ĕлкĕрнĕ, çурт-йĕрне йĕркене кĕртнĕ. Граждансене авариллĕ çуртсенчен куçарнă чухне вара асăннă территорие пĕтĕмпех тасатма тивет, нимĕнле хуралтă та хăварма май çук. Çуртне кăçал е çур çул маларах туса лартнă пулин те. Çурта авариллĕ тесе йышăннă пулсан çĕнĕ хваттере куçнă чухне унта пурăнакансен пурин те пур хуралтăсемпе  çĕр участокĕсене те пăрахма тивет.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе ыйту çук темелле. Пур ялсенче те артезиан скважинисем, шыв уçламалли башньăсем пур. Пурте вĕсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Аварисем пулмаççĕ мар. Анчах та ял администрацийĕ вĕсене вăхăтра пĕтерессипе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма тăрăшать. Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ Муркашрипе пĕрлешнĕ май çак ĕçсене Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн ĕçченĕсем пурнăçлаççĕ. Пур артезиан скважинисемпе шыв уçламалли башньăсем те Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн балансĕ çинче пулнă, халĕ те çаплах. Ответлисем çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессинчен пăраннă тĕслĕхсем пулман.

Пур ялта та çĕрлехи вăхăтра урамсенче хунарсем çутассине йĕркеленĕ. 2013 çулта çав тĕллевпе ял администрацийĕ 500 пин тенкĕ ытла тăкакланă. Паллă ĕнтĕ, электричество лампочкисем çунса кайни пулкалать. Мăн Сĕнтĕрте вара урамри хунарсен юписем питĕ çӳллĕ, вышкăсăр лампочкăсене улăштарма май çук.

Мăн Сĕнтĕрте канмалли кунсенчи пасар ĕçлет. Кĕркунне ку пасар патне каякан çул пылчăклăрах пулчĕ. Мĕншĕн тесен кĕрхи кунсем ăшă та çумăрлă килчĕç. Ял администрацийĕн пуçлăхĕнче Г. Мазиков ĕçленĕ чухне 2008 çулта кунти çула пĕтĕмпех юсанă.

2013 çулта ял администрацийĕ ялсенчен йăла каяшĕ турттарса тухма вăтам шутпа 150 пин тенкĕне яхăн тӳлерĕ. Çапла, Мăн Сĕнтĕр ялĕн варринче шырлан пур. Çынсем хăш чухне унта çӳп-çап кайса тăкаççĕ. Шырлан тавра тытнă хӳме çине кунта çӳп-çап тăкма юраманни, уншăн штрафлама пултарасси пирки пĕлтерӳ çакнă. Хăшĕсем вара çак пĕлтерӳ патнех çӳп-çап тăкса хăвараççĕ. Кунта çынсен культури пирки калаçас пулать. Хамăра хамăр хисеплеме пĕлмелле.

Мăн Сĕнтĕрте йăла каяшне пухма тата турттарса кайма контейнерсем пур. Ялсенче вара каяш пухăннă май çынсем ăна хăйсемех турттарса каяççĕ. Мĕншĕн тесен каяша турттарса каясси ял тăрăхне питĕ хакла кайса ларать. Ăна утилизациленĕшĕн вара ял тăрăхĕ тӳлет.

Юлашкинчен вара район хаçачĕ урлă депутатсен районти Пухăвĕн депутатне П. Воробьева çавăн пирки калас кăмăл пур. Ял тăрăхĕн проблемисем пирки статья çырма хăвăрт пулать. Анчах та ял администрацине пырса ку проблемăсем пирки пĕрле канашланинчен, вĕсене пĕрле татса пама тăрăшнинчен усси ытларах пулĕ тесе шухăшлатăп.

## Саламлатпăр



Январĕн 19-мĕшĕнче пирĕн юратнă, ăшă кăмăллă мăшăрăн, аттен, асаттен – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Алексей Максимович НИКОЛАЕВĂН** сумлă юбилей. Эпир ăна 80 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Мăнаçлă Атăл шывĕн çулĕ евĕр вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Пурнăçу телей çырмипе лăпкăн юхтăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн  нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Турри сана пулăшса вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр.

Çăл куçне валакĕ кирлĕ
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхма,
Аттеçĕм, пире эс кирлĕ
Туслă йышпа пурăнма.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем Тимурпа Артем, тăванĕсем.**



Кашмашра пурăнакан **Фаина Ивановна АЛЕКСАНДРОВĂНА** 50 çулхи юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç тулăх та вăрăм килтĕр, иксĕлми вăй-хал, тулли телей, хĕвеллĕ те çутă кунсем кăна, пархатарлă та çирĕп сывлăхпа ыр кăмăллăх сунатпăр сире, хисеплĕ кин, инке, Фаина Ивановна!

**Салампа Александровсемпе Захаровсен çемйисем.**



Юратнă, хаклăран та хаклă аттене, кукаçа, асаттене, пирĕн çывăх çыннăмăра – Оринин салинче пурăнакан **Илья Сергеевич СОЛОВЬЕВА** сумлă юбилейпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сире вăрăм кун-çул парнелетĕр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, кинĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, 3 мăнукĕ, тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая – Милютакасси ялĕнче пурăнакан **Людмила Аркадьевна ОПРИСКОВĂНА** 60 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемье вучахĕ тикĕссĕн ялкăштăр, унта яланах килĕшӳ, ăнлану хуçаланччăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай-нумай çул усратăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, хĕрĕ, юратнă икĕ мăнукĕ тата çывăх тăванĕсем.**

Хисеплĕ те юратнă мăшăра, ăшă кăмăллă аннене – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Зоя Леонидовна НИКИТИНĂНА** сумлă юбилейпа саламлатпăр.



Кĕркунне пек тулăх пултăр ĕмĕрӳ,
Чир мĕнне ан пĕлтĕр сывлăху,
Тату пултăр ĕмĕр пурнăçу,
Такăр пултăр ялан сан çулу.
Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма ялан вăй-хал парать.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Отарккă ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Пачкасси ялĕнче пурăнакан **Раиса Семеновна ИВАНОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вĕсем мăшăрĕпе Николай Геннадьевич Ивановпа икĕ ача çуратса пăхса çитĕнтернĕ. Шел пулин те, мăшăрĕ вăхăтсăр пурнăçран уйрăлса кайрĕ... Халĕ Раиса Семеновна ачисемпе, мăнукĕсемпе йăпанса пурăнать, пирĕн 89 çулхи юратнă аннене пăхса пурăнать. Пире, аннен 7 ачипе тăванĕсене, ăшă кăмăлпа кĕтсе илет, çепĕççĕн ăсатса ярать. Эпир сана юрататпăр, çирĕп сывлăх, телей, ăнăçусем сунатпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: хунямăшĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

# Хут çине палăртса хунин усси çук

**Сăмах – райадминистраци ĕçченĕсене**



Спортăн хĕллехи тĕсĕсене аталантарма пирĕн районта майсем сахал мар. Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1 номерлĕ ятарлă шкулĕн Муркашри филиалĕн йĕлтĕр трасси çинче ачасем тăтăшах тренировкăна тухаççĕ. Йĕлтĕр йĕрне лайăх пăхса, снегоходсемпе таптаса тăраççĕ. Ку трасса çинче спорт разрячĕсене пурнăçлама та ирĕк пур – ятарлă лицензи илнĕ. Калайкассинчи вăтам шкул патĕнчи йĕлтĕр йĕрне те йĕркеллĕ пăхса тăраççĕ. Ку трасса çинче спорт нормативĕсене пурнăçласа çирĕплетме хальлĕхе май çук, ăна сертификацилемен-ха, анчах та йĕлтĕр сырнă ачасене кунта яланах курма пулать. Çак икĕ трассăран пуçне Çатракассинчи, Сыпайри шкулсем çумĕнчи йĕлтĕр йĕрĕсем те тивĕçлĕ шайра. Районти кашни шкул патĕнче йĕлтĕр йĕрĕ пурри кашнинех паллă ĕнтĕ.

Районта хоккей та вăй илсе пырать. Пурĕ 5 хоккей курупки: Муркашра – ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн, Юнкăра, Мăн Сĕнтĕрте, Калмăккассинче тата Сыпайра. Юнкăри тата Сыпайри курупкасене шкулсем пăхса тăраççĕ пулсан, Калмăккассинче – пуçаруçăсем, спорта юратакансем. Мăн Сĕнтĕрти хоккей курупки вара, шел пулин те, вырăнта никама та кирлĕ мар пулас: шкул та, ял тăрăхĕ те ăна ĕçлеттерес кăмăлли палăрмасть. Никама та кирлĕ маррине курупкана тунă чух халăх шухăшне шута хуманнипе ăнлантарма кăна пулать пулĕ. Кунта коньки сырас текенсем пачах та çук курăнать. Асăннă вырăнсенчи пăр курупкисене кашни çын тӳлевсĕр кĕрсе конькипе ярăнма пултарать. «Сывлăх» ФСК-ра вара конькие вăхăтлăх илме те май пур. Кунта электричество çути çителĕклĕ, çавăнпа та каçпа ĕçрен пушансан та ярăнма май пур. Сыпайри тата Калмăккассинче те çакăн пек лайăх майсем тунă.

Анчах та акă мĕн каламалла. Ачасене, çамрăксене (вĕсем ачасем пек нумайăн мар пулин те) йĕлтĕр йĕрĕсемпе пăр çинче курма пулать, аслисем вара çак ырлăхпа пачах та усă курмаççĕ. Ачасем акă хоккейла выляссипе ӳсĕмсем тума та ĕлкĕрчĕç. «Ылтăн шайба» хоккей клубĕн ăмăртăвĕсене хутшăннă май вĕсем Мускав облĕçĕнче те, Краснодар енче те хоккейла выляма тивĕçлĕ пулчĕç.

Спортăн хĕллехи тĕсĕсене аталантарас тесе район администрацийĕ пысăк тимлĕх уйăрать, анчах та аслисен çӳрекĕлĕхĕ «кăлăхах» тесе каланăн туйăнать. Çавăнпа та вырăнти предприятисен организацисен ертӳçисен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен позицийĕ активлă пулмалла. Çулталăкра пĕр-икĕ ăмăрту ирттерни çителĕксĕр. Тĕллевлĕн ĕçлемелле, пуçаруçăсене пулăшма тăрăшмалла. Ачасен шучĕпе кăна ăмăрту «ирттертĕмĕр» тесе хут çине палăртса хунин усси çук.

**В. ПЕТРОВ,**
**район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн сектор ертӳçи.**

# Унтанпа виçĕ çул çитрĕ

**Следстви комитетĕнчен**

***Раççей Федерацийĕн следстви комитечĕ хăй ĕçне уйрăм орган шайĕнче пурнăçлама пуçланăранпа январĕн 15-мĕшĕнче виçĕ çул çитрĕ. Муркаш районĕнчи пай Раççей Федерацийĕн Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи пайĕн тытăмĕнче вăйра тăрать. Унсăр пуçне кунта Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсем кĕреççĕ. Асăннă орган ертӳçинче Евгений Виссаров вăй хурать, районти ку тĕлĕшри ĕç-хĕле Илья Федотов ертсе пырать, пĕтĕмпе сакăр сотрудник тимлет.***

***Следстви комитечĕн ертӳçинчен Евгений Георгиевичран иртнĕ çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетме ыйтрăм.***

– Пирĕн пай çине уйрăмах йывăр преступленисем, вăл шутра çынна вĕлерни, хĕсĕрлени, мăшкăллани, вĕсемпе суту-илӳ туни, коррупци, терроризм тата çакăн йышшисене уçасси тиеннĕ. Тĕрлĕ преступление тишкернĕ май иртнĕ çул уголовлă 120 ытла ĕç пуçарнă, 120-шне вĕçленĕ. Следстви палăртнă тăрăх çак тапхăрти мĕн пур преступлени 33 миллион ытла тенкĕ тăкак кӳнĕ, вăл шутран 666 пин тенкине каялла тавăрма май килнĕ. Унсăр пуçне следовательсем ыйтнипе айăплисен пурлăхне 31 миллион ытла тенкĕлĕх арестленĕ.

Граждансене хамăр компетенци пирки ытларах ăнлантарнипе тата следовательсен халăхпа тăтăшах калаçнипе тĕрлĕ çăхав-пĕлтерӳ хисепĕ чакрĕ. 2012 çулта вĕсем 65 пулнă, иртнĕ çул – 46. Пирĕн пай следовательсен йышăнăвне 55 граждан килнĕ.

Çынна вĕлернĕ преступленисем питех те пăшăрхантараççĕ, çавăн йышшисене тĕпчессине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Иртнĕ çул çын кун-çулне татнă 16 факт пулнă, вĕсене пурне те тĕпчесе тупса палăртнă. Следовательсем шалти ĕçсен пайĕнчи оперативлă служба сотрудникĕсемпе килĕштерсе тимленипе преступленисем уçасси çӳллĕ шайра пырать. Ушкăнпа тунă хăрушă преступлени пирки маларах пĕлтернĕччĕ. Çапла вара Муркаш район сучĕ А. Зариповăна, К. Владимировăна, И. Алексеевăна ирĕкрен хăтарчĕ. Проституци ĕçĕпе явăçнăскерсем хăйсен юлташĕн кун-çулне татнă пулнă.

Тепĕр чухне айăплă çынна тупса палăртма май килменнипе хăш-пĕр преступление уçасси пĕр çулта пĕтмест. Иртнĕ çул унччен тунă 4 преступление следовательсем тĕпчесе вĕçлерĕç.

Çул çитменнисем тĕлĕшпе тунă преступленисене те пысăк тимлĕх уйăратпăр. Иртнĕ çул тĕрлĕ синкере пула 11 çамрăк инкек тӳсрĕ. Вĕсем тĕлĕшпе тунăран пуçарнă уголовлă 10 ĕçе суда тăратнă ĕнтĕ. Акă Чăваш Республикин Аслă сучĕ Н. Маткин айăплă пулнине çирĕплетрĕ. Вăл кĕçĕн çулхи хĕр ачана мăшкăллама тăнă, çавна май пӳтсĕр арçын чылайччен йĕплĕ пралук леш енче пулĕ.

Ответлă ĕçченсене те айăплама тивет. Ял тăрăхĕн 2 пуçлăхĕ тата 2 депутат тĕлĕшпе суд приговор вуланă. Шалти ĕçсен пайĕн 2 сотрудникĕн приговорĕ те вăйра, пĕри куçман пурлăхпа ултав тунă, тепри çул-йĕр факчĕпе çыхăннă. Иккĕшне те ирĕкрен хăтарнă ĕнтĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

# Мĕншĕн амантрĕç-ха черченкĕ чуна?

Кашни ача çут тĕнчене телей курма, кун-çула тĕрĕс-тĕкел пурăнса ирттерме, хăй хыççăн çĕр-шыва юрăхлă çирĕп ăру тата ырă ятпа ĕç хăварма килет – çыннăн тĕп пĕлтерĕшĕ çакăнта. Таса юратура тĕвĕленнĕ чун – ача – кирек епле ашшĕ-амăшĕшĕн те пурнăç тĕллевĕ пулса тăрать, ăна вăл тивĕçлĕ воспитани парса куç шăрçи пек хӳтĕлесе ӳстересшĕн тăрăшать. Ача-пăча ялан сенкер тӳпе айĕнче пĕр чăрмавсăр выляма-кулма пултартăр, ун çулне пӳтсĕр çын ан таттăр, черченкĕ кăмăл-туйăмне киревсĕр ĕçпе ан амантттăр. Çакна манар мар, тин кăна çут тĕнчене килнĕ тĕпренчĕк – обществăри тулли правапа хӳтлĕхри çын!

Пурнăç пĕр тикĕссĕн килмест çав. Шел те, тĕрлĕ сăлтава пула кĕçĕн çулхи ачасем те хăрушă преступление лекеççĕ. Пĕчĕк хĕр ача тĕлĕшпе иртнĕ çул тунă преступлени пирки чылайăшĕ илтнĕ ĕнтĕ. Ирсĕр ĕç кӳршĕри Етĕрне районĕнчи пĕр ялта пулнăччĕ, инкек кӳрекенни – пирĕн район çынни. Çапла вара нумаях пулмасть Чăваш Республикин Аслă сучĕн приговорĕпе Муркаш районĕнчи пĕр ялта пурăнакан 28 çулхи Николай Маткин айăплă пулнине çирĕплетнĕ. Вăл Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 132 статьян 4 пайĕнчи «б» пунктри (кĕçĕн çулхи ача тĕлĕшпе ирĕксĕрлесе мăшкăл ĕçĕсем туни) йĕркене сĕмсĕррĕн пăсса преступлени тунă. Çапла вара çӳлерех асăннине тĕпе хурса Николай Маткина 13 çуллăх ирĕкрен хăтарма йышăннă. Ирсĕр преступник çак вăхăта çирĕп режимлă колонире ирттерĕ. Çавăн пекех ытти сăлтава шута илсе çӳлерех асăннă айăплав тапхăрĕ çумне ăна тепĕр икĕ çул хушса панă.

Раççей Федерацийĕн Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи пайĕ тата суд çакна тĕпчесе палăртнă. Иртнĕ çулхи августăн 22-мĕш каçхине Муркаш районĕн çӳлерех асăннă çынни кӳршĕри Етĕрне районĕнчи пĕр яла хăйĕн хĕр-пĕлĕшĕ патне хăнана кайнă. Ун тĕлне вара усалли пирки тавçăрма та пултарайман урамри ним айăпсăр пĕчĕк хĕр ача çакланнă. Çав самантра арçыннăн кăмăл-туйăмĕ ирсĕр шухăш-тĕллевпе тулнă ĕнтĕ. Николай маларах та ку енĕпе усал ĕç тума ĕлкĕрнĕ çав тата йĕплĕ пралук леш енче те пулнă. Çапла вара пӳтсĕр арçын наччасрах 9 çулхи хĕр ачана çавăрса илнĕ, улталаса-астарса çывăхри çырмана илсе кайнă. Паллах, вăй питти арçынна пĕчĕкскер хирĕç тăраймасть ĕнтĕ. Шел те, вăл вăхăтра пусмăрçă çул-йĕрне пӳлекен çывăхра никам та пулайман çав. Хăй тĕллевне пурнăçа кĕртме палăртнă чунсăр арçыннăн кăмăл-туйăмне хĕр ача ĕсĕклесе йăлăнни те çемçетеймен, черченкĕ кĕлетки чĕтренни те унра çынлăх туйăмне çуратайман. Çапла вара пĕчĕкскерне парăнтарма вăй-хал нумаях та кирлĕ пулман, тискерлĕхне чарайманнипе ăна ирĕксĕрлесе хывăнтарнă...

Хĕр ача килте çуккине кура асламăшĕ шырава тухнă, преступник çулне пӳлнĕ. Пĕчĕкскер хăй асламăшĕ патне çуллахи канăва килнĕ, çав самантра вара вăл çуртран инçех мар уçăлса çӳренĕ.

...Каç сĕмĕ çапнă тӳпе кăна йăлтах сăнанă мĕн пулса иртнине. Вăштăр-вăштăр çилĕ тайăлтаракан курăк-чечек те черченкĕ пит-куç çумне перĕнсе татти-сыпписĕр йĕнĕ тейĕн çак самантра. Йывăр пĕлĕт хăй ытамне илсе ирсĕр ĕçрен хăтаринччĕ те хăть пĕчĕкскерне. Çук çав, иртнĕ самант каялла таврăнаймĕ, тăтлнă хĕлĕх те сыпăнаймĕ. Пӳтсĕрĕн вара тивĕçлипех ответ тытмалла, ун йышшисемшĕн нихăçан та каçару ан пултăр. Чăваш Республикин Аслă сучĕ те ку тĕлĕшпе çирĕп приговор йышăннĕ.

Палăртса хăвармалла, Николай Маткин маларах та çакăн йышши ирсĕр ĕç тунă. Мăшкăлланăшăн ăна 2004 çулта айăпланă, 8 çуллăх ирĕкрен хăтарнă пулнă. Çапла вара çамрăкскер каллех преступлени тăвас çул çине тăнă.

Çакна та палăртса хăварас килет, аслисен ача-пăча тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пулмалла, вĕсем ăçта тата кампа кайнине-выляннине, пушă вăхăта мĕнле ирттернине тата ыттине пĕлме, асра тытма тăрăшмалла. Вăл е ку инкек-синкек пулас пулсан мĕн тумаллине те ăнлантармалла ачасене. Иккĕленӳллĕ çынсенчен аякран иртме май тупмалла.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Райадминистрацире**

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2014 çулхи январĕн 14-мĕшĕнчи 4 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Массăллă информаци хатĕрĕсен сферине аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Роза Александровна МАКАРОВĂНА**, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн корреспондентне;

– **Наталия Николаевна НИКОЛАЕВĂНА**, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн социаллă пурнăç пайĕн редакторне.

2. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Алевтина Артемьевна КОЧНОВĂНА**, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн уй-хир бригадин бригадирне.

**Культура ыйтăвĕсемпе**

# Çĕнĕ канаш ĕçе тытăнчĕ

Çĕнĕ çул уявĕсем хыççăн çынсем Калайкассинчи Культура çуртне йышлăн пухăнчĕç. Пĕрле пухăнса вĕсем валли уяв йĕркелерĕмĕр.

Уява ытларах аслăрах çулхисем тата вăтам вăхăтрисем пуçтарăнчĕç. Кунта çуралса ӳснĕ пулин те, чылайăшĕ хулара е ытти çĕрте ĕçлесе пурăнать. Уяв, кану кунĕсене вара яла килеççĕ. Пĕрле пулса калаçма, савăнма никам та хирĕç мар.

Уява Культура çурчĕ çумĕнчи «Ентеш» юрăпа ташă ушкăнĕ илем кĕртрĕ. Юррисем те унта Калайкасси тăрăхне, кунти вырăнсене, тăван кил-çурта халалланисем пулчĕç.

Çавра сĕтел хушшине пухăнсан вара Культура çурчĕн ертӳçи Тамара Вострейкина Культура çурчĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, Калайкасси тăрăхĕнче çуралса ӳснисен канашне йĕркелеме сĕнчĕ. Ăна 5 çынран суйлама килĕшрĕç. Вырăнти ыйтусене лайăхрах татса пама майсем пулĕç.

Кайран Хĕл мучипе Юр пике килсе çитрĕç. Уява пуçтарăннисем сăвăсем вуларĕç, юрăсем юрларĕç, вăййăсем выляреç. Çĕнĕ канаш сĕннипе уявсене малашне те пĕрле хатĕрленсе ирттерме калаçса татăлчĕç.

Калайкассисене уявпа саламлама кӳршĕри предприниматель Вячеслав Голубев пырса çитрĕ. Çĕнĕ çул ячĕпе пурне те вăл ырлăх-сывлăх, ăнăçусем сунчĕ.

Канаш йĕркеленине канаш членĕ, хăмлаçăсен ассоциацийĕн ертӳçи Геннадий Горланов та ырларĕ, ку пуçару аван пулнине палăртрĕ. Канаш валли вара ĕçсем тупăнсах пырĕç.

**Т. ВОСТРЕЙКИНА,**
**Калайкассинчи Культура çурчĕн ертӳçи.**

**Вĕренӳ учрежденийĕнче**

# Кашни юрă пĕлтерĕшлĕ

«Шкул çулччĕнхи ачасене патриотла воспитани парассинче тăван юрă-кĕвĕпе усă курар» проект шайĕнче Москакассинчи «Колокольчик» ача садĕнче тĕл пулу иртрĕ. Унта Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Александров тата районти ача сачĕсенче вăй хуракан музыка ертӳçисем хутшăнчĕç. Асăннă мероприяти пурин кăмăлне те çĕклерĕ. Кунта пухăннисемшĕн вара кăсăкли чылай пулчĕ.

Владимир Михайлович пултаруллă çын, унăн юрри-кĕввисем çут çанталăка сăнлаççĕ, атте-аннене хисеплеме вĕрентеççĕ. Философиллĕ тарăн шухăшлă юрăсем композиторăн питĕ нумай. Çавăн пек юрăсенчен пĕри, «Вĕçекен кун-çул» ятли, чуна çывăх пулнăран куракансене эпĕ парнелерĕм.

Москакассинчи вăтам шкулти 9-мĕш класра вĕренекен Даша Макарова Владимир Александров юррисемпе республика шайĕнче иртекен «Мехел» конкурса виçĕ хутчен тухрĕ. Пултаруллă хĕр ача çак уявра та тĕрлĕ юрăпа савăнтарчĕ.

Çӳлерех асăннă проекта вăя кĕртессипе çак тĕл пулăвăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Юлашки вăхăтра вара ачасем чăвашла калаçма кăмăлласах каймаççĕ, çавна май сăвă-юрă вĕренессинче те çакă хăйне майлă йывăрлăх кăларса тăратать.

Хаклă ашшĕ-амăшĕсем, хамăрăн тăван чĕлхемĕре манас марччĕ, ăна ытларах хаклама тăрăшасчĕ, чăваш ятне вара çӳле çĕклесчĕ. Çавăн пекех кăçал Культура çулталăкĕ пулнине асра тытасчĕ.

**В. МАКАРОВА,**
**музыка ертӳçи.**

**Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ**

# Отчетсем йышăнма тытăннă

Февралĕн 17-мĕшĕнчен кая юлмасăр ĕç паракансем 2013 çулшăн шутласа панă тата тӳленĕ страховани взносĕсен расчечĕсене, 2013 çулхи 4-мĕш кварталти персонифицированнăй учет даннăйĕсене тата ĕçлекенсене 2013 çулшăн шутласа панă ĕç укçин сведенийĕсене тăратма тивĕç.

Муркаш районĕнче çынсене ĕçе илсе ĕçлеттерекен 369 страхователĕн отчетсем тăратмалла. Вăл шутран финанспа хуçалăх ĕç-хĕлне туса пыманнисем 91 страхователь. Отчетсене «пĕр чӳрече» мелĕпе йышăнаççĕ, графиксемпе ĕç паракансене тивĕçтернĕ.

Организацисенчен отчетсене Интернет урлă электрон мелĕпе электронла цифра мелĕпе алă пуснипе усă курса çыхăнăвăн хӳтĕленĕ каналĕсем урлă йышăнаççĕ. Ку вăл ĕç паракансемшĕн отчетсем тăратмалли хальхи ансат мел пулса тăрать. Тӳлевсĕр программăсем пирки кирлĕ информацие Раççей Пенси фончĕн официаллă сайтĕнче «Работодателям и предпринимателям региона» пайра http://www.pfrf.ru/ot chuvash/ адреспа вырнаçтарнă.

# Вăй-хăват çителĕклĕ, майсем те пур

Шалти ĕçсен пайĕнче



«Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн потенциал пысăк, лайăх результатсемпе ĕçлеме майсем пур», – çапла пĕтĕмлетрĕ ЧР тăрăх шалти ĕçсен министрĕ Сергей Семенов генерал-майор пирĕн районти шалти ĕçсен пайĕн иртнĕ çулхи ĕçне тишкернĕ хыççăн.

РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн пĕлтĕрхи ĕçне пĕтĕмлетме ытлари кун, январĕн 14-мĕшĕнче пухăнчĕç. Ларăва хутшăнса право сыхлав ведомстивсен вырăнти ертÿçисемпе пĕрле район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи обществăлла канаш ертÿçи В. Вязов тата ветерансен канашĕн ертÿçи Ю. Соловьев та ĕç кăтартăвĕсемпе паллашрĕç.

Вырăнти лару-тăрăва сÿтсе явиччен малтан С. Семенов генерал-майор кĕскен республикăри лару-тăру çинче чарăнса тăчĕ. Малтанхи çулхипе танлаштарсан республика кăтартăвĕсем лайăхрах – преступленисем тăвасси 14 процент чухлĕ чакнă. Йывăр тата уйрăмах йывăр, пурлăх тĕлĕшпе тата обществăлла вырăнсенче тунă преступленисем йышĕ чакнă. Республикăри криминоген лару-тăрăвне министр стабиллĕ тесе палăртрĕ, анчах та çак кăтартусен шайĕнче пирĕн районти лару-тăру вара чаплах курăнмасть – преступленисем тăвасси 1 процент чухлĕ кăна чакнă. Çавăнпа та полицейскисен шутламалли те, ĕçлесе çитермелли самантсем те сахал маррине палăртрĕ министр.

Районти лару-тăрупа пай пуçлăхĕ Е. Плечов паллаштарчĕ. Иртнĕ çул пурĕ 375 преступлени тунине регистрациленĕ, вĕсен шутĕнче йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисем, ÿсĕрле тунă, сынна хирĕç тунă преступленисем нумайланнă. Çакăнпа пĕрлех вăрăлла ĕçсене уçса парассин динамики лайăхханнине те, обществăлла вырăнсенче, вăл шутра урамра тăвакан преступленисем чакнине те палăртмалла.

Обществăлла вырăнсенче йĕркелĕх шайĕ лайăххланни çине «Хăрушлăхсăр муниципалитет йĕркеленĕвĕ» районти тĕллевлĕ программа витĕм кÿнине каламасăр иртме çук. Пай пуçлăхĕн çумĕ В. Григорьев хăй сăмахĕнче çак программа мĕнле пурнăçланса пыни çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. 2013 çултанпа – программа ĕçлеме пуçланăранпа районта çынсем масăллă пулакан вырăнсенче, предприяти-организацисен таврашĕнче сахал мар видеокамера вырнаçтарнă ĕнтĕ. Оборудование туянса вырнаçтарасси район, çакăнпа пĕрлех хăш-пĕр предприяти-организацисен бюджечĕн уйăракан укçа-тенкĕпе пурнăçланса пырать. Шалти ĕçсен пайĕпе пĕрлех район администрацийĕ те, ертÿçĕсем те çынсен хăрушсăрлăхĕ пĕлтерĕшлине мала хунине ырламалла паллах.

Çынсем вара полицейскисене ытларах шанма тытăнни çултан-çул вĕсенчен килекен хыпарсемпе пĕлтерÿсен хисепĕ ÿссе пынинче те палăрать. Акă пĕлтĕр полицейскисем пурĕ 6231 хыпар илсе тĕрĕсленĕ, вĕсем тĕлĕшпе саккунлă йышăнусем тунă.

Ларура полици пайĕн ытти сотрудникĕсем те тухса каларĕç: кашниех ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе малашне мĕнле утăмсем тăвасси çинче чарăнса тăчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен вара ÿсĕрле преступлени туни канăç памасть: кашни иккĕмĕш преступление ÿсĕрле тунă. Министр пĕлтернĕ тăрăх кун пек «пулăм» республикăри ытти районсенче çав тери çивĕч тăмасть мĕн, Муркашра вара... Апла пулсан ку таранччен пурнăçланă асăрхаттару ĕçĕ те, йĕрке пăсакансене административлă явап тыттарни те (пурĕ 7393) çителĕксĕр пулса тухать. Пирĕн район валли уйрăм саккун йышăнма çук паллах, çавăнпа та профилактика ĕçне тепĕр хут тишкерсе ăна урăхларах йĕркелесси пирки те каларĕç пакунлисем.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев профилактика субъекчĕсен пĕрлĕхĕ пирки калană чух çак ыйтăва та айккинче хăвармарĕ. Районта ирттернĕ профилактика кунĕсем малашне те пуласса, шалти ĕçсен пайĕн сĕнĕвĕсене шута илсе тачă çыхăнура ĕçлессе шантарчĕ вăл.

Шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи обществăлла канаш ертÿçи В. Вязов полицейскисем халăх умне тухса хăйсен ĕçĕпе паллаштарнине ырласа палăртрĕ. Обществăлла канаш та полицейскисемпе пĕрле активлă ĕçлеме хатĕррине пĕлтерчĕ.

Хамăр тăрăхри йĕркелĕх хамăршăнах лайăх пулнине патшалăх влаç органĕсемпе обществăлла йĕркеленÿсен кăна ăнланса уншăн тăрăшни çителĕксĕр – çакна районта пурăнакан кашни çыннăн ăнланса илесчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Православи кĕтесĕ

# Христос Туррăмăр шыва кĕнĕ кун

Иисус Христос шыва кĕнине январĕн 19-мĕшĕнче асăнаççĕ. Пирĕн Çăлаканăмăр халăхсене вĕрентме тухас умĕн Иордан хĕррине Иоанн пророк патне шыва кĕме пынă. Иоанн патне шыва кĕме пыраканcем пурте çылăхĕсене каласа ÿкĕннĕ те, вара тин вĕсене шыва кĕртнĕ. Иисус Христос çылăхсăр пулнă. Иоанн хăйне Ун умĕнче тивĕççĕре хурса Турă Ывăлне шыва кĕртме хăйяйман. Çавăнпа та Иоанн: «Санăн Хăвăн мана шыва кĕртмелле, епле тата Хăвах ман пата килтĕн», – тесе каланă. Иисус Христос ăна хирĕç каланă: «Ан чар халĕ, пирĕн пур тĕрĕслĕхе те çапла тума кирлĕ», – тенĕ. Христос Туррăмăр «тĕрĕслĕх» тесе Турă йĕркине, Турă тума хушнине каланă. Иоанн ун сăмахне итлесе Ăна шыва кĕртнĕ. Çав вăхăтра сасартăк пĕлĕт уçăлса кайнă. Иисус Христос çине Турă Сывлăшĕ Кăвакарчăн пек курăнса аннине Иоанн курнă. Çав вăхăтрах тата Атте Турăран çапла сасă илтĕннĕ: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм, Ман Ирĕкĕм Ун çинче», – тенĕ.

Иисус Христос шыва кĕнине урăхла Турă курăнни (Богоявление) теççĕ. Ун чухне эпир пуççапакан Туррăн виçĕ Ипостаçĕ те палăрнă.

Иисус Христос шыва кĕрсе Хăй Турăлăхĕпе ăна тасатнă, шыва çынна тасатакан вăй-хăват панă. Çакна асăнса чиркÿре праçник кунĕнче те, сочельник кунĕнче те (январĕн 18-мĕшĕнче) шыва кĕлтуса тасатаççĕ. Çав тасалнă шыва ĕненсе ĕçекенĕн ÿчĕ те, чунĕ те сывалать, курăнакан курăнман тăшмансене сирсе ярать. Çак шывпа сирпĕтсен кил-çурт усал-тĕселрен тасалать. Çавăнпа çав шыва килте тытса яланах усă кураççĕ.

Çак кунсенче шыва кĕлтуса тасатма тата çырмана е кÿлĕ çине, е çăл патне каяççĕ. Ĕненекенсем çак вырăнсенче шыва кĕрсе тухса, шывпа сапăнса тасалаççĕ.

**Йÿçкассинчи чиркÿ настоятелĕ Сергий атте.**

Çул-йĕр çинче

# Пĕр-пĕрне асăрхаттармалла

Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх пирки – ачасен хăрушсăрлăхĕнчен пуçласа водительсене вĕрентсе хатĕрлесси таранах – пур шайра та çивĕч калаçу илтме пулать. Кашни ыйтăва татса парасси, çул-йĕр çинчи лару-тăрăва лайăхлатасси пирĕнтен пуринчен те килмест паллах, анчах та руль умне ÿсĕрле ларса çула тухни – эпир тÿрлетме пултаракан самантсенчен пĕри.

Иртнĕ çул республикăри çул-йĕр çинче ÿсĕр водительсене пула 150 инкек тухнă. Çакă вăл пĕтĕмĕшле хисепĕн 11,2 процентĕнче танлашать. Муркаш район территорийĕнче вара пĕлтĕр çак сăлтава пула тухнă 4 инкекре 7 çын суранланнă. Кунпа пĕрлех 123 водителе административлă явап тыттарнă. Маларах асăннă 4 инкекрен 3-шĕ вырăнти çулсем çинче, ялсем çывăхĕнче пулса иртнĕ. Водителĕсем – пурте хамăр район çыннисемех.

Эрех-сăра кăшт ĕçни те хускану шайлашăвне пăсать, çавăнпа та манпа нимĕн те пулмасть-ха, çитмелли вырăна çитетпĕрех тесе ÿсĕрле çула тухмалла мар. Çакăн пек «çул çÿревсем» инкекпе вĕçленме пултараççĕ. Çавăнпа та чи малтан хăвăрăн тата юнашар çынсен хăрушсăрлăхĕ пирки шухăшламалла.

Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе административлă яваплăха çирĕплетнĕ ĕнтĕ: ÿсĕрле руль умне ларса çула тухнăшăн транспортпа çÿреме ирĕк паракан праваран хăтарнипе пĕрлех суд 30 пин тенкĕ административлă штраф парассине йышăнма пултарать. Çапах та транспорт хатĕрĕпе çула ÿсĕрле тухакан водительсем сахалланниех палăрмасть-ха. Апла пулсан ГИБДД сотрудникĕсен кулленхи тимлĕхĕ кăна çителĕксĕр, йĕркене пăсасинчен пĕр-пĕрне асăрхаттарни те вырăнлă пулмалла.

Январĕн 17–19-мĕшĕсенче акă пирĕн районта «Урă мар водитель» ятарлă операци иртет. Çак ĕçе ку хутĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене те явăстарма пăхса хунă.

**С. ИВАНОВ,**
**ГИБДД уйрăмĕн районти пуçлăхĕ.**

# Иртнисĕр малашлăх çук

Район 70 çул тултарнă май

Иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук теççĕ. Хамăр историе, иртнĕ çулсене пĕлни кирек камшăн та, кирек хăçан та кирлĕ тесе шухăшлатăп.

Пирĕн Муркаш районĕ 1944 çулта йĕркеленнĕ. Унччен вара Панкли тăрăхĕнчи ялсем Элĕк районне кĕнĕ. Çав çулах май уйăхĕнче «Колхозник сасси» ятпа район хаçачĕ те пичетленсе тухма тытăннă.

1954 çулта – Муркаш районне йĕркеленĕренпе 10 çул çитнĕ чухне пире, Панкли шкулĕнче вĕренекен ачасене, ун чухнехи шкул директорĕ Николай Кириллов тăрăшнипе Муркаша экскурсие илсе кайрĕç.

Эпир ун чухне хальхи пек автомашинăпа каяйман. Вăл вăхăтра автомашинисем те пулманпа пĕрех. Йĕркеллĕ çулĕсем те пулман. Çуранах 15 километр таран утма тиврĕ. Район центрĕнче вăл вăхăтра икĕ хутлă çуртсем те курăнмастчĕç.

Пире район хаçачĕн типографийĕ вырнаçнă пĕчĕк йывăç çурта илсе кайрĕç. Унта эпир сас паллисене пухса сăмахсене епле йĕркелени, хаçата калăпланипе интересленсе паллашрăмăр. Кун пеккине халиччен курман ачасемшĕн ку питĕ кăсăклă пулчĕ. Вăл вăхăтра район хаçачĕн редакторĕнче Поликарп Семенов, ответлă секретарĕ пулса Петр Яковлев вăй хуратчĕç.

Района йĕркеленĕренпе 70 çул çитнине пĕрлех çитес çул район хаçачĕн пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнăранпа та 70 çул çитет. Халĕ вăл 5 пине яхăн тиражпа «Çĕнтерÿ ялавĕ» ятпа пичетленет. Редакци икĕ хутлă хăтлă çуртăн иккĕмĕш хутĕнче вырнаçнă. Кунта ĕçлекенĕн кашнин хăйĕн уйрăм ĕç пÿлĕмĕ.

Малтанхи вăхăтра ялсенче килĕрен тенĕ пекех радио калаçнă пулсан, иртнĕ çулсенче ăна пĕтерчĕç. Çавăнпа та республикăра тата районта пулса иртекен событисене, хыпарсене ытларах район хаçачĕ урлă пĕлсе тăратпăр.

Паянхи куна район хаçачĕн тĕп редакторĕ пулса Анатолий Тихонов вăй хурать. Редакцире яланах кăмăллă кĕтсе илеççĕ. «Çĕнтерÿ ялавĕнче» пире интереслентерекен тĕрлĕ статья сахал мар пичетленсе тухать. Эпир район хаçатне яланах юратса вулатпăр. Эпĕ ас тăваса вăл темиçе хутчен те тĕрлĕ шайри дипломсемпе грамотăсене илме тивĕçрĕ.

Çĕнĕ 2014 çул, çывăхри юбилей ячĕпе район хаçатĕнче ĕçлекенсене чунтан саламлатăп, пархатарлă ĕçĕнче вĕсене вăй-хал сунатăп. Малашне те халăха кăмăла каякан статьясемпе хаçата интереслĕ кăларса тăмалла пултăр. «Çĕнтерÿ ялавĕ», вăрăм пултăр санăн кун-çулу.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**
Хурăнкасси ялĕ.

Редакци почтинчен

# Пĕлес килет

Нумаях пулмасть Юнкă ял тăрăхĕнче пулнă чух çапла çырнине вулама тÿр килчĕ: «ул. Яркунушкăнь». Пĕлетĕп-ха кунта Яргунькино (Яркуньен) урам пур. Çавăн пекех – Яргунькин хушаматлисем те.

«Ушкăнь» сăмах пĕлтерĕшне тĕпчес килчĕ. Ку сăмах «ушкăн» сăмахран пулнă. Пĕр тăвансем пĕр-пĕр çĕнĕ вырăна (сĕн çĕре) куçса ларсан ялсене «ушкăнь» çапла хушнă. Çавăн пекех кил-йыша, ял-йыша, хурăнташа пĕлтернĕ.

Пушкăрта куçса кайнă тури чăвашсем паян куна та «ушкăн» сăмахра «хурăнташ» сăмах пĕлтерĕшпе упраççĕ.

Кун пек сыпăкпа пĕтекен ялсем нумай-ха. Уйрăмах вĕсем Етĕрне (5), Элĕк (9) районĕсенче сарăлнă. Элĕк районĕнчи Яккушкăнь (Якейкино), Ярхуньушкăнь (Яргунькино), Илленушкăнь (Ильянкино) – кунта эпĕ ялсен ячĕсем вырăсла мĕнле куçнине те танлаштартăм.

Çавăн пекрех ялсем ĕлĕкрех тата та пулнă мĕн. Хăшĕ-пĕри вырăсла ятне е япăхран, е Сталин саманине юрăхлă мартан улăштарнă. Тĕслĕхрен, хамăр района кĕрекен Рикушкăнь ялне 1939 çулхи август уйăхĕнче чиперех Рыковкино тесе çырнă, унтан вара – Сосновка (Уйкас Янасал ял тăрăхĕ).

Çĕмĕрле районĕнче Хупахушкăнь текен ял пулнă (Кабацкая), ăна 1964 çулта Луговая тесе çырнă.

Пĕлес килет. Республикăра «ушкăнь» сыпăкпа пĕтекен ялсемпе урамсем пĕтсе пынипе пĕрех, анчах та Юнкă ял тăрăхĕнче «ушкăнь» сыпăкпа пĕтекен урама хăçан йĕркеленĕ тата мĕншĕн «ь» паллăпа? Пĕлекенсем пулсан хаçата çырса пĕлтерсен пуриншĕн те интереслĕ пулмалла.

**Б. ШУРНОВ.**

Муркаш ялĕ.

## Сиплевлĕх анлăн çунат сарчĕ

Тем тĕрлĕ чир алхасрĕ, урчĕ,
Чирĕсем иртсе каймарĕç...
Сиплев пулмарĕ халăха,
Нумай çын юлчĕ тăлăха.
Тем чуль хĕн-хур ĕç халăх курчĕ.
Муркаш çĕклерĕ сиплев çурчĕ –
Чĕр шанчăк кĕчĕ халăха,
Вăл утрĕ çĕн малашлăха.
Сиплевлĕх анлăн çунат сарчĕ –
Халь 80 çул тултарчĕ
Муркаш районĕн сиплев çурчĕ.
Пархатарне пур халăх курчĕ.
Çĕклентĕр çĕнĕ сиплев çурчĕ,
Вăйлантăр чунлăх кермене.
Сиплекене – хевет, мухтав!
Чун-чĕререн хĕвеллĕ тав!

**К. ПОТЯНОВА.**

## Çемьери килĕшÿрен чылай килет

Пирĕн пата çыраççĕ

Пурнăç çемьере тĕрлĕрен пулма пултарать. Çапах та малашлăхри пурнăç та, ачасене йĕркеллĕ те сывă пăхса ÿстересси те, вĕсене çĕр-шывшăн усăллă çынсем тăвасси те чи малтанах çемьепе çыхăннă тесе шухăшлатăп. Ĕмĕре пĕрле пурăнса иртернĕ ветерансен çемйисем ыттисемшĕн, çамрăксемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Пирĕн Шомик ялĕнче кун пек çемьесем сахал мар. Акă Осиповсен илер. Герман водитель пулса ĕç ĕмĕрне иртернĕ. Людмила вара сутуçăра ырми-канми тăрăшнă. Иккĕшĕн те ĕç стажĕсем 30 çултан кая мар.

Акă Раисăпа Валерий Ильинсенех илер тата. Вĕсен кил-çуртне курсан тĕлĕнсе каятăн. Пĕтĕмпех илемлĕ, хăтлă, çÿп-çап таврашĕ курăймăн.

Верăпа Семен Ильмендеровсем пирки те япăххине нимĕн те калама пултараймастăп. Хăйсене пăхса ачисем те ĕçчен те хастар. Ватă çынна сывлăх сунмасăр нихăçан та иртмеççĕ.

Лизăпа Юрий Смирновсем те хăй вăхăтĕнче алă усса ларнă çынсем мар. Ĕçрен нихăçан та хăраса тăман.

Тамарăпа Михаил Каликовсем те ĕçчен те тăрăшуллă çынсем. Тăраниччен çывăрса та курмаççĕ пулĕ. Çамрăксемшĕн, хальтерех çемье çавăрнисемшĕн чăннипех тĕслĕх.

Пурне те вĕсене Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа ырă сывлăх, ăнăçусем, телейлĕ çемье пурнăçĕ сунас килет.

**СОНЯ.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**Итоги публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

13 января 2014 года в 15 час. 00 мин. в МБУК «Юнгинский информационно-культурный центр» по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Юнга, улица Центральная, дом 5, корпус 1, прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

Приняты следующие рекомендации участников публичных слушаний:

1. Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

**Председательствующий, глава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики В.В. ФОМИН.**

**ООО «ОБРЯД» оказывает следующие виды ритуальных услуг:**
**изготовление и установка надгробных памятников, также для умерших (после 12.06.1990 г.) участников ВОВ.**
**Реализует кресты, гробы, ограды, столы, скамейки, венки и пр.**
**Изготовление портретов на гранитной плите.**
**Адрес: г. Чебоксары, переулок Ягодный, д. 4 «А», тел.: 8(8352)35-10-83, 8-903-389-99-29; с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2, тел.: 8-903-063-41-42. 1-3.**

**Продаю СЕНО В ТЮКАХ (20 кг). Люцерна. Первый и второй укос. Д. Шомиково.**
**Тел.: 8-917-668-86-10, 8-917-665-88-11.**

**Сумалли икĕ качака сутатăп. Тел.: 8-927-866-20-54.**

* * *

**Тюкланă утă сутатăп. Тел.: 8-927-855-31-95.**

* * *

**Тюкланă утă сутатăп. Катькас ялĕ.**
**Тел.: 8-919-665-04-32, 65-5-22. 1-2.**

* * *

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 1-10.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:250801:1, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, Александровское сельское поселение, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Аникин Александр Витальевич, Чувашская Республика, Юськасинское сельское поселение, с. Юськасы, ул. Молодежная, д.1, кв. 1.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Петровым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-30. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:250801:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Александровское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иванова Роза Дмитриевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тиуши, ул. Зеленая, д. 7.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата № 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, территория землепользования СПК им. Мичурина, северо-восточнее д. Тиуши.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания земельных участков относительно размера и местоположения границ выделяемого земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.




## Тав тăватпăр

Шăпа мана декабрьте Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне илсе çитерчĕ. Ю.А. Кузнецов хирург тараватлăн йышăнчĕ, операци тумалли палăртрĕ. Çапла вара Г.М. Огурцов тата Н.Е. Григорьев хирургсем операци турĕç. Ун хыççăн кунти ытти специалистсем – анестезиологсем, медицина сестрисем, санитаркăсем – ырми-канми тăрăшрĕç. Ырă чунлă та тараватлă ĕçченсен пире, ватă çынсене, ыттисемпе танах йышăнаççĕ. Вĕсене пурне те Кивĕ çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп, çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатăп.

**Елена Осипова, пенсионер.**
Пăсăрман ялĕ.




**Ремонт стиральных машин-автоматов и ремонт газовых (Мора и Горинье) плит. Гарантия. Быстро. Качественно. Тел.: 38-58-45, 8-927-668-58-45. 4-10.**

* * *

**Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка.**
**Тел.: 8-927-668-96-96. 3-10.**

* * *

**ПРОДАЮ ЯЧМЕНЬ, ПШЕНИЦУ И ОВЕС. Тел.: 8-905-199-61-77. 3-5.**

* * *

**Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 2-12.**

«ВИКТОРИЯ – ОКНА»
ИП Шишкин
Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата.
Скидка на все – 40%.
1-10. Тел.: 8-937-955-33-00.

**В КПКГ «КапитаЛ» требуется кредитный специалист, образование высшее, неоконченное высшее. Тел.: 8(8352)62-05-80. 2-4.**

* * *

**СХПК «Герой» по пятницам продает на рынке в с. Моргауши зернофураж молотый с добавлением подсолнечного жмыха и мела в мешках – 30 кг – 294 руб.**
**Тел.: 8(83541)67-5-48, 67-5-79, 8-927-865-41-24. 2-2.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92. 3-23.**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 2-68.**

**Продаю ПЕСОК РЕЧНОЙ от производителя с Шешкарского карьера. Отгрузка через электронные автовесы. Самовывоз, возможна доставка от 100 тонн.**
**Тел.: 8-917-078-86-60, 22-86-60. 5-5.**

**24 января в РДК с. Моргауши с 9 ч. до 16 ч. состоится продажа обуви из натуральной кожи производства г. Ульяновск и Белоруссии. Осень. Зима.**

**В г. Казань срочно требуются монолитчики. Проезд, питание, проживание, спецодежда. Зарплата своевременная, каждые две недели.**
**Тел.: 8-906-135-99-00. Сергей.**

**Филиал ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» в с. Моргауши направляет на обучение на курсы подготовки слесарей по эксплуатации и ремонту газового оборудования 3 разряда с последующим трудоустройством. Курсы начнутся 27 января 2014 года. По всем вопросам обращаться по тел. 60-2-27 или подойти в приемную филиала по адресу: д. Ландыши, ул. Цветочная. 2-2.**

* * *

**Требуются кассиры в кафе «Юмарт» (д. Юнгапоси, АЗС «Сибнефть»). Тел.: 8-961-344-22-73. 2-2.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13. 3-4.**

* * *

**Продаю родословных щенков западно-сибирской лайки, окрас серый (волчий). Дата рождения: 12.12.13 г. Тел.: 8-937-388-55-16, 63-0-39. Николай.**

* * *

**Требуется продавец-консультант с медицинским образованием в «Оптику Гранд», (с. Моргауши). З/п от 14000 руб., график работы 5/2, соц. пакет.**
**Тел.: 8-937-395-87-29. 1-2.**

Çатракасси вăтам шкул коллективĕ кунта техслужащире ĕçлекен А.Г. Анисимовăн ашшĕ
**Герман Анисимович**
**АНИСИМОВ**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта хуçалăх заведующийĕнче ĕçлекен А.Н. Шишокинăн тăван аппăшĕ
**Галина Николаевна**
**ВЯЗОВА**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта техслужащире ĕçлекен Н.В. Никитинăн амăшĕ
**Надежда Николаевна**
**КАСЬЯНОВА**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта рабочи пулса ĕçлекен В.Г. Егоровăн тăван пиччĕшĕ
**Владимир Владимирович**
**МАКЕЕВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Сосновкăри шкул коллективĕ тата кунта пĕлӳ илнĕ ачасем çак шкулта нумай çул чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ З.А. Ильинан ывăлĕ
**АРКАДИЙ**
чылай вăхăт чирленĕ хыççăн пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри тĕп больница коллективĕ Мăн Сĕнтĕр больницинчи Г.Г. Егорова педиатрăн амăшĕ, кунта нумай çул хуши тăрăшнă
**Антонина Михайловна**
**КУЛЬКОВА**
ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо глубоко скорбят и выражают искреннее соболезнование заведующей Ойкасинского магазина ТПС Красновой Л.Л. в связи с тяжелой утратой – смертью матери
**СЕЛИВЕРСТРОВОЙ**
**Феонии Анатольевны.**

## Прогноз погоды

| | суббота 18 января | | | | воскресенье 19 января | | | | понедельник 20 января | | | | вторник 21 января | | | | среда 22 января | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | **-10** | **-11** | **-10** | **-12** | **-13** | **-14** | **-14** | **-16** | **-18** | **-19** | **-17** | **-17** | **-17** | **-16** | **-14** | **-16** | **-17** | **-20** | **-18** | **-22** |
| Давление мм | 743 | 744 | 745 | 746 | 747 | 748 | 749 | 751 | 752 | 753 | **755** | **755** | **756** | **756** | **755** | **755** | **754** | **754** | **755** | **756** |
| Влажность % | 83 | 88 | 84 | 86 | 87 | 83 | 75 | **91** | 78 | 89 | 78 | 79 | 79 | 90 | 82 | 89 | 79 | **94** | 79 | 80 |
| Ветер м/сек | 6 | 4 | 5 | 3 | 3 | 2 | 5 | 3 | 4 | 3 | 3 | 3 | 3 | 3 | 3 | 4 | 3 | 1 | 2 | 2 |
| | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-В | С | С | С-З | С-З | С | С-З | С-З | З | З | З | З | Ю-З | С-В | В |
| Солнце восход / заход | | 09:09 | 16:57 | | | 09:08 | 16:59 | | | 09:06 | 17:01 | | | 09:05 | 17:03 | | | 09:03 | 17:05 | |
| Луна восход / заход | | 19:54 | 09:27 | | | 21:02 | 09:47 | | | 22:10 | 10:06 | | | 23:20 | 10:25 | | | - | 10:44 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 17.01.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4931.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.